# КИЛЕНĔÇĔ - ИСКУССТВĂРА

***Чăваш халăх художникĕ Владимир Иванович Агеев апрелĕн 2-мĕшĕнче 70 çул тултарать.***

«Эпĕ Чăваш çĕрĕ çинче çуралса ÿснĕ, çавăнпа маншăн тăван тавралăх, унăн çыннисем, йăли-йĕрки питĕ çывăх. Эпĕ хам лайăх ăнланнине çеç ÿкеретĕп. Чăваш художникĕн мĕншĕнха Австрали, Африка пурнăçне ÿкермелле, вăл вĕт унти çынсен, вырăнсен, чĕрчунсен, ÿсен-тăранăн, çанталăкăн, тавралăхăн илемне, вĕсен сывлăшне ăнланмасть. Чăвашсене ÿкернĕ чухне эпĕ пĕтĕм чунтан киленсе ĕçлетĕп, вĕсен куçĕсем мĕн каланине, вĕсен шухăшĕсене, туйăмĕсене, чунĕсене курса-пĕлсе тăратăп», - тет Владимир Иванович хăйĕн творчествин тĕп çул-йĕрне палăртса. Вăл чăнах та - халăх художникĕ, чăвашсен пурнăçне живопиçре, графикăра, станковăй графикăра туллин сăнарлакан ăстаçă. Чăваш пурнăçĕн тематикине ĕмĕрĕ тăршшĕпех тытса пырать вăл. Хăйĕн ÿкерчĕкĕсемпе мĕн чухлĕ кĕнекепе журнала илемлетмен-ши Агеев? Тăван халăх шăпипе çыхăннă историллĕ картинăсемпе пейзажсем те, портретсем те пур В. Агеевăн. Яланах пурнăç чăнлăхне тĕп вырăна хурса ĕçлет вăл.

Владимир Иванович тĕлĕнмелле йăхран - Яки йăхĕнчен. 1914 çулччен вĕсем Аккеев хушаматпа çÿренĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче унăн аслашшĕн хушаматĕнче «кк» вырăне «г» çырса вырăсла манерлĕ хушамат туса хунă иккен. Владимир Ивановичăн аслашшĕ, Никита Петрович Аккеев тиек пулнă, ун чухне нумай вĕреннĕ çын шутланнă, пуян библиотека тытнă. «Асатте вырăс тата ют çĕршыв литературисен классикĕсене веçех пĕлетчĕ, - тесе аса илет В. Агеев. Ашшĕ, Иван Никитич, тата амăшĕ, Надежда Леонтьевна, округри малтанхи фотографсем пулнă. Кунсăр пуçне ашшĕ питĕ аван ÿкернĕ, купăс каланă. Çавăнпа та Владимир Агеев пĕчĕкрен сăнарлă искусствăна, илемлĕх тĕнчине туртăнса ÿснинчен тĕлĕнмелли çук.

Владимир Агеев 1932 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă. Ача 4 çулта чухне çемье Елчĕке куçнă. 8-мĕш класс хыççăн пулас художник Шупашкарти патшалăх художество училищине вĕренме кĕнĕ. Ун хыççăн çарта пулнă. Пурнăç университечĕ пуян пулнă Владимир Ивановичăн, паллă художниксенчен тата хăй тĕллĕн ĕмĕрĕ тăршшĕпех вĕреннĕ вăл. Вăхăт унăн картинисене те суйлать, паллах. Анчах сăнарлă искусствăра, тăван халăх пуянлăхĕн çÿпçинче Владимир Иванович ÿкерчĕкĕсем юлаççех.

**А. ВАСИЛЬЕВА.**